Отдел образования администрации города Новочебоксарска
Чувашской Республики

Городской фестиваль педагогических идей
«И вдохновение, и мастерство»

Конкурс «Лучший сценарий внеурочного мероприятия»

# **«Пурăн, çут çанталăк!»** çулçӳрев

Разработала
Ефимова И. В.
учитель чувашского языка
МБОУ «СОШ №9»

Новочебоксарск, 2024

**Ачасен ӳсӗмӗ:** 7-8 класс (вырӑс чӗлхиллӗ шкул)

**Тӗллевӗсем:** вӗренӳпе кӑсӑкланма хавхалантарни; çут çанталӑк çынсен пурнӑçӗнче пысӑк вырӑн йышӑннине ӑнланса илме пулӑшни; çут çанталӑка упрамаллине, юратмаллине туйтарни; ачасен калаçу чӗлхине, тавракурӑмне тата тавçӑрулӑхне аталантарни.

"Пурӑн, çут çанталӑк" класс мероприятийӗн сценарине 7-8-мӗш класри вӗренекенсем валли палӑртнӑ. Мероприяти çут çанталӑкри экологи культурине пӑхӑнма, перекетлеме вӗрентет. Мероприяти сценарине 9-мӗш шкулта вӗренекен ачасем çырнӑ сӑвӑсене, çут çанталӑкра харпӑр хӑйне мӗнле тытмалли правилӑсене кӗртнӗ. Ачасем экологи проблемисене пултарулӑхпа практика ӗçӗсем урлӑ лайӑххрах ӑнланаççӗ. Тӗрлӗ ӗçсене пурнӑçланӑ чухне ачасем чечек татма, шыв-шурсене варалама, çӳп-çапа пӑрахса хӑварма юраманнине ӑнланаççӗ. Вӗсем хӑйсем пурӑнакан вырӑнта экологие лайӑхлатма мӗн тума пултарасси çинчен шухӑшлаççӗ.

Эпиграф: «Çут çанталӑка упрасси – кашни çыннӑн тивӗçӗ»

## Сценари юхӑмӗ

**Ертсе пыраканни:**

Ачасем, паян эпӗ сире çут çанталӑкӑн тӗлӗнмелле илемлӗ тӗнчине çулçӳреве кайма чӗнетӗп. Çут çанталӑк вӑл - илӗртӳллӗ тӗнче. Вӑл пурнӑçпа питӗ тачӑ çыхӑннӑ. Анчах çынсем çут çанталӑка хакламаççӗ. Вӑл çынна савӑнӑç кӳрет, хуйха-суйха мантарать.

Халӗ çулçӳреве тухатпӑр!

**1. РАУНД: «САЛАМЛАНИ»**.

Сцена çине "Янкӑр тӳпе" ушкӑна чӗнетпӗр.

**Девиз:** Çут çанталӑк – пирӗн тус!

Çӗн ӑру, пуçна ан ус!

Сцена çине "Кайӑксем" ушкӑна чӗнетпӗр.

Девиз: Кайӑксемпе чӗр чунсем,

Йывӑççемпе чечексем -

Çынсен савӑнӑçӗсем

**2. РАУНД: «КАПИТАНСЕН КОНКУРСӖ».**

Капитансем тĕрлĕ кайăксем çинчен калакан сыпăксене итлеççĕ, хăш хайлавран пулнине калаççĕ.

1. «Çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать, ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕписене тăрантарать». («Чакак»)

2. «Сасси аван, хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Киккирикĕ пысăк, тĕклĕ уралла, качи вăрăм». («Автан»)

3. «Вĕсем кӳлĕ çине анса ларнă. Вăхăтăн-вăхăтăн пĕр акăшĕ вĕçсе кайнă, анчах часах каялла таврăннă». («Туслăх»)

4. «Çĕр шапи çурине кам хăратнине ниепле те ăнкарса илеймен. Вара хăй ишсе тухса шыв çинче мĕн пуррине асăрханă та çапла каланă:

- Ку вăл акăш. Питĕ хăрушă кайăк». («Акăшпа çĕр шапи çури»)

5. «Тăмана хăйĕн ывăлне вĕрентсе çапла каланă:

- Кăнтăр кунĕнче йăваран вĕçсе ан тухнă пултăр. Хĕвел сана суккăрлатать – эсĕ киле çул тупаймăн». («Чăрсăр тăмана чĕппи»)

6. «Кăрли-инк! Кăрли-инк! – тесе пĕрин хыççăн тепри вĕçсе хăпарчĕç, кӳлĕ тĕлĕнче пĕр çавра вĕçсе çаврăнчĕç те кăнтăр еннелле çул тытрĕç». («Тăрнасем»)

- Маттур, ачасем. Эсир ушкăн ертӳçисем пулма тивĕçлĕ.

**3. РАУНД: «Пурăн, çут çанталăк!»**

Ушкăнпа тумалли ĕç: экологи лару-тăрăвне татса парасси.

**1-мĕш ситуаци**

**Проблема**

Пурăнмалли микрорайонта автостоянка тума палăртнă. Вăл çуртсем, тротуарсем, вылямалли тата уçăлса çӳремелли ача-пăча площадкисемпе юнашар вырнаçнă.

**Мĕн кĕтет:**

1. Автомашинăсем сывлăша сиенлĕ хутăшсемпе вараласçĕ.
2. Автомашинăсем пурăнмалли çуртсем çывăхĕнчи çулсене ватаççĕ. Çакна пула çынсем ӳксе сусăрланма пултараççĕ.
3. Таса мар сывлăша пула ачасем чирлеме пултараççĕ.
4. Яланах шав тăрать.

**Сĕнӳ:**

Автостоянкăна пурăнмалли çуртсенчен аяккарах тумалла. Вĕсен çывăхĕнче йывăççем лартмалла. Ача-пăча площадкисем тавра карта тытмалла.

**2-мĕш ситуаци**

**Проблема**

Хула паркĕнче кивĕ йывăççене касса тăкнă. Пайăн-пайăн касса татнă вуллисем çĕр çинчех выртаççĕ. Вĕсене парк территорийĕнчен илсе тухма питĕ хаклă. Ыйтăва татса пама сĕнĕр.

**Мĕн кĕтет:**

1. Ватă йывăççем çамрăк йывăççене чир ертме пултараççĕ.

2. Каснă туратсем парка илемсĕрлетеççĕ.

3. Уçăлса çÿрекенсене чăрмантараççĕ, ăнсăртран сусăрлама пултараççĕ.

**Сĕнÿ:**

Субботник тумалла. Йывăç пайĕсене  ача-пăча площадкине илемлетме усă курма пулать.

**4. РАУНД: «РЕКЛАМА»**

**Ертсе пыраканни:**

Хальхи вăхăтра экологи лару-тăрăвĕ малти вырăнта тăрать. Пултарулăх конкурсĕ ирттерĕпĕр. Çут çанталака сыхлама чĕнекен реклама плакатне хатĕрлесе куракансем умĕнче хÿтĕлемелле.

1. "Таса шыв" реклама

2. "Чĕрчунсене сыхлар» реклама

(Ачасене реклама хатĕрлеме темиçе минут памалла)

Çав вăхăтра куракансем ыйтусене хуравлаççĕ.

**Ыйтусем:**

1. Çуркунне чи малтан килекен кайăк. (Курак)

2. Кĕлеткинчен хÿри вăрăм. (Чакак)

3. Юрă ăсти. (Шăпчăк)

4. Пурăнас çул шутне палăртакан кайăк. (Куккук)

5. Сенĕк хÿреллĕ кайăк. (Чĕкеç)

6. Тÿпе юрăçи. (Тăри)

7. Вăрман тухтăрĕ. (Ула такка)

8. Хăйĕн çăмартисене ют йăвана хурса хăваракан кайăк. (Куккук)

**5. РАУНД: „Музыка тăхтавĕ“ (Килти ĕç)**

Хутшăнакансене чĕрчунсен, вĕçен  кайăксен ячĕсене асăннă юрăсене аса илсе юрлама сĕнеççĕ.

**6. РАУНД: «Çут çанталăка упратпăр».**

**Ертсе пыраканни:**

Хаклă тусăмсем! Çут çанталăк илемĕпе пурте киленетпĕр. Пирĕн çут çанталăка хÿтĕлемелле, упрамалла, сыхламалла. Анчах та хăшĕ-пĕрисем вăрманта, уй-хирте, улăхра,

юханшыв хĕрринче тата ытти çĕрте хăйсене мĕнле тытмаллине пĕлмеççĕ. Вĕсем валли асăрхаттару паллисем пур. Эсир вĕсене пĕлнине тĕрĕслесе пăхăпăр.
Мĕнле ăнлантаратăр-ха эсир çак паллăсене?



**Пĕтĕмлетӳ**
**Вĕрентекен:**

- Ачасем, Çĕр Планета – пирĕн пĕрлехи çурт, унта пурăнакан кашни çыннăн çут çанталăк пуянлăхне упрамалла, унпа тирпейлĕ усă курмалла. Пирĕн йывăççем лартмалла, ращасене пăхмалла, хĕлле вĕçен кайăксемпе тискер кайăксене тăрантармалла, кăткă йăвисене аркатмалла мар. Çут çанталăкпа туслă пулсан хамăра та сăвап пулĕ.

- Пирĕн шкулти ачасем хăйсен сăввисенче тавралăха юратнине, сăнанине, ăна сиен тăвакансенчен хăтарас килнине кăтартма пултарчĕç.

*Ачасеем хăйсем çырнă сăввисене вуласа параççĕ.*

Вăрманта шăпрах çӳре,
Кайăка ан кансĕрле!
Ан вăрат чĕр чунсене
Юрат кĕçĕн туссене!

Ан хуç  йывăç туратне
Вăл туять ыратнине.
Хурлантарĕ çынсене,
Çимĕç памĕ малашне.

Ан тат хитре чечеке
Куçăм тулли илеме.
Хĕрхен, тусăм, черчене
Савăнтартăр çынсене.

Ан тыт кайăк йăвине
Ан хăрат эс чĕппине.
Амăш сивĕнĕ унран
Таврăнмĕ унта кайран.

Кăткă йăвине ан ват
Патакпа та ан пăтрат.
Вăл сăтăрçа пĕтерет
Тăпрана та çемçетет.

Кăвайт ан чĕрт вăрманта
Пушар тухĕ самантра.
Пĕтĕç йывăç-курăксем,
Чĕр чунсемпе кайăксем.

**Чĕнÿ, сĕнÿ** (маларах хатĕрлени)
Мероприятие пухăннă çынсене пурне те валеçсе параççĕ.

**Хушма материал**

Чĕнÿ, сĕнÿ

- Çут çанталăк – пирĕн кил. Ăна упра тата сыхла.
- Ÿсен-тăрана ан пĕтер, чĕр чунсене ан вĕлер.
- Шыва, сывлăша, тăпрана ан варала.
- Ниçта та хăв хыççăн çÿп-çап ан хăвар.
- Наркăмăшлă кăмпасене тапса ан ывăт, чĕр чунсерне вĕсем сиплĕ.
- Çут çанталăкăн тусĕ пул!

Презентаци слайчĕсем






















